Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчене пухать

65 (7919) № * Юн кун, 2011 çулхи çурла (август) уйăхĕн 24-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Çĕнтерӳçĕсем тĕслĕх кăтартаççĕ



*Суворов яч. хис. хуçалăхри Р. Кузнецовпа Ю. Орлов комбайнерсен экипажĕ вырма ĕçĕсем пуçăннăранпах районта малта.*

**Вырма – 2011**

**Вырмана хутшăнакан механизаторсен районти конкурсĕн итогĕсене пĕтĕмлетес енĕпе йĕркеленĕ комиссин ларăвĕ иртнĕ. Вырмана хутшăнакан комбайнерсен августăн 12-мĕшĕнчен тытăнса 18-мĕшĕччĕнхи ĕçĕсене пĕтĕмлетнĕ.**

**«Акрос-530»** тата **«Дон-1500»** класлă комбайнпа ĕçлекенсем хушшинче çаксем малта:

1-мĕш вырăнта – Суворов яч. хис. хуçалăхри **Радонеж Виссарионович Кузнецов** экипажĕ («Акрос-530» комбайнпа 450 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ).

2-мĕш вырăнта – «Свобода» хуçалăхри **Петр Апполонович Толикин** экипажĕ («Дон-1500» комбайнпа 319 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ).

3-мĕш вырăнта – Суворов яч. хис. хуçалăхри **Степан Николаевич Афанасьев** экипажĕ («Дон-1500» комбайнпа 318 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ).

**«Вектор», «Полесье»** тата **«Енисей-954»** класлă комбайнпа ĕçлекенсем хушшинче çаксем малта:

1-мĕш вырăнта – Чкалов яч. хис. хуçалăхри **Болеслав Николаевич Никитин** экипажĕ («Вектор» комбайнпа 440 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ).

2-мĕш вырăнта – Ильич яч. хис. хуçалăхри **Олег Мефодьевич Григорьев** экипажĕ («Полесье» комбайнпа 343 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ).

3-мĕш вырăнта – чикĕллĕ яваплăхлă «Бездна» обществăри **Анатолий Иванович Кудряшов** экипажĕ («Вектор» комбайнпа 319 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ).

**«Енисей-1200»** класлă комбайнпа ĕçлекенсем хушшинче:

1-мĕш вырăнта – Ильич яч. хис. хуçалăхри **Владислав Иосифович Аврамов** экипажĕ (365 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ).

2-мĕш вырăнта – Ильич яч. хис. хуçалăхри **Евгений Петрович Васильев** экипажĕ (362 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ).

3-мĕш вырăнта – Е. Андреев яч. хис. хуçалăхри **Серафим Ипполитович Алексеев** экипажĕ (155 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ).

«СК-5 «Нива» класлă комбайнпа ĕçлекенсем хушшинче:

1-мĕш вырăнта – А.И. Толстовăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнчи **Александр Иванович Толстов** экипажĕ (140 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ).

2-мĕш вырăнта – «Герой» хуçалăхри **Владимир Романович Васильев** экипажĕ (82 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ).

3-мĕш вырăнта – «Герой» хуçалăхри **Василий Викентьевич Васильев** экипажĕ (67 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ).

Конкурс итогĕсемпе килĕшӳллĕн 1-мĕш вырăна тухнă экипажсем 300-шер тенкĕлĕх, 2-мĕш вырăна тухнисем 200-шер тенкĕлĕх, 3-мĕш вырăна тухнисем 100-шер тенкĕлĕх свидетельствăсене тивĕçнĕ.

**Конкурса хутшăнар!**

## «21 ĕмĕрти Кулибин»

«Трактор завочĕсен концернĕ» корпоративлă управлени компанийĕ» чикĕллĕ яваплăхлă общество, Раççейри машинăсем тăвакансен союзĕ, ЧР Ял хуçалăх, Промышленноçпа энергетика тата суту-илӳ министерствисем граждансем килсенче ăсталанă трактор техникин «21 ĕмĕрти Кулибин» конкурсне ирттереççĕ.

Конкурс икĕ номинацине пулать:

– трактор техники;

– ял хуçалăх машинисемпе оборудованисем.

Конкурса хутшăнас текенсен район администрацийĕн ял хуçалăх пайне авăн уйăхĕн 1-мĕшĕччен килсе пĕлтермелле.

**С. НИКОЛАЕВ,**
**патшалăх техника надзорĕн инспекторĕ.**

**Раççей патшалăх ялавĕн кунĕнче**

## Çамрăксен аллинче – паспортсем

Иртнĕ тунти кун, çурла уйăхĕн 22-мĕшĕнче, çĕршывра пурăнакансем Раççей патшалăх ялавĕн кунне паллă турĕç.

Паспорт – Раççей гражданинĕн тĕп документĕ. Апла пулсан ăна граждансене вăхăтра парса-улăштарса тата килен-каянсене регистрацилесе тăрасси пе РФ ЧР федераллă миграци службин управленийĕн районти территори пункчĕ туса ирттерекен ĕçĕн тӳпи те пысăк. Кун хыççĕнче вара конкретлă çынсен ĕçĕ-хĕлĕ тăрать.

– Хамăр патăмăра килекен кашни гражданинăн ыйтăвне вăхăтра та туллин тивĕçтерме тăрăшатпăр. Çапла вара кăçал паянхи куна районта пурăнакан анчахрах 14 çул тултарнă 246 яшпа хĕре Раççей гражданинĕн паспортне патăмăр. Ку вăл пирĕн насса шутламан, – хăюсăррăн пĕлтерчĕ паспортсем парас вăхăт пуçланиччен Сĕньял Муркашра пурăнакан Алена Яковлева **(сăн ӳкерчĕкре).**

Раççей Федерацийĕн çамрăк граждансене çакна çирĕплетекен тĕп документа – паспорта – официаллă лару-тăрура район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов пачĕ.

– Эсир паспорт илекен кун ыттисенчен уйрăлса тăрать. Паян – Раççей Федерацийĕн Патшалăх ялавĕн кунĕ. Çакă сире патшалăх символĕпе, Раççей граждланлăхĕпе мăнаçлантартăр. Эпир хамăр çĕр-шыва юратса ĕçлесен çеç вăл татах тĕреклене, вăйланĕ. Çакна эсир аннанса пурăнасса шанатăп, – терĕ Юрий Александрович çамрăксене тĕп документсене тыттарнă май.



Çак кун Алена Яковлевăпа пĕрле Муркаш ял тăрăхĕнче пурăнакан Алинăпа Марина Степановасем (йĕкĕрешсем), Александр Орлов паспортсем илчĕç.

– Ачасем паспорт илнипе саламлатпăр. Вĕсемпе пĕрле хамăр паспорт илнĕ вăхăтсене аса илетпĕр, – терĕç ачисемпе пĕрле пырса çитнĕ Н.В. Яковлевăпа О.Е. Орлов.

Паспорт илни çамрăксен пурнăçĕнчи тĕп самант пулса юлĕ.

**А. ПЕТРОВ.**
**Н. ГРИГОРЬЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

общество хăйĕн аталанăвĕнче тепĕр утăм малалла пуснине кăтартать, – терĕ Раççей Федерацийĕн Чăваш Республикинчи федераллă миграци службин управленийĕн районти территори пункчĕн ертӳçи Любовь Геннадьевна Плечова.

Пирĕнсĕр пуçне район администрацийĕн ларусем ирттермелли пĕчĕк залĕнче алла пĕрремĕш хут паспорт илекен пĕр яшпа виçĕ хĕр, ашшĕпе амăшĕсем.

– Паспорт илесси пирки эпĕ яланах ĕмĕтленнĕ, анчах паянхи пек пăлхаса шутламан, ...

## Ĕççем пĕр вырăнта тăмаççĕ

**РАЙОНТИ ЯЛ ХУÇАЛĂХ ПРОИЗВОДСТВО КООПЕРАТИВĔСЕМПЕ ХРЕСЧЕН (ФЕРМЕР) ХУÇАЛĂХĔСЕНЧЕ ВЫРМА ĔÇĔСЕМ ЕПЛЕ ПЫНИНЕ ТАНЛАШТАРУЛЛĂ КĂТАРТНИ**
**(çурла уйăхĕн 23-мĕшĕ тĕлне)**

**Колонкăсенче: 1. Хуçалăхсем. 2. Пĕтĕмпе вырнă (гектарпа). 3. Пурнăçланă ĕçсен калăпăшĕ (процентпа). 4. Тыр-пул тухăçĕ (пĕр гектар пуçне центнерпа). 5. Улăм пуçтарнă (процентпа). 6. Акма çĕр хатĕрленĕ (гектарпа).**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 425 | 58 | 31,8 | 92 | 200 |
| «Восток» | 450 | 85 | 23,6 | 89 | 157 |
| «Герой» | 410 | 61 | 23,7 | 2 | 85 |
| Ильич яч. хис. | 600 | 74 | 34,2 | 83 | 200 |
| «Моргаушская» | 390 | 69 | 25,0 | 100 | – |
| «Оринино» | 598 | 85 | 20,0 | 94 | 176 |
| «Передовик» | 120 | 20 | 20,0 | 58 | – |
| «Свобода» | 730 | 65 | 28,1 | 21 | 290 |
| Суворов яч. хис. | 700 | 68 | 31,8 | 54 | 460 |
| «Ударник» | 904 | 70 | 30,0 | 55 | 250 |
| Чапаев яч. хис. | 270 | 42 | 27,8 | 59 | 140 |
| Чкалов яч. хис. | 496 | 65 | 30,0 | 100 | 300 |
| «Путь Ильича» | 45 | 13 | 22,9 | – | 80 |
| «ДаАн» | 70 | 100 | 25,0 | 71 | 10 |
| Мичурин яч. хис. | 300 | 60 | 24,0 | 67 | 90 |
| «ВаСем» | 265 | 58 | 25,0 | 100 | 150 |
| АПФ «Колос» | 120 | 55 | 25,0 | 83 | 50 |
| «Гея» | 60 | 52 | 20,0 | 83 | 35 |
| «Бездна» | 100 | 61 | 30,0 | 10 | 50 |
| Сретинский С.К. | 170 | 79 | 36,5 | 59 | 10 |
| Бархаткин В. В. | 231 | 59 | 26,0 | 65 | 118 |
| Горбунов В.В. | 145 | 74 | 20,0 | 100 | 10 |
| Толстов А.И. | 220 | 96 | 28,0 | 100 | 50 |
| Афанасьев А.А. | 30 | 38 | 20,0 | 67 | 350 |
| Пихтеров А.Н. | 225 | 68 | 22,5 | 80 | 80 |
| Никитин А.Н. | 105 | 38 | 9,0 | 57 | 20 |
| **РАЙОНĔПЕ** | **9349** | **61,7** | **26,2** | **70** | **3631** |

**Хресчен пур-çук вăхăтпа усă курса çитес çулхи тухăç пирки ĕмĕтленсе кĕрхи культурăсем акасси çинчен те шутлать. Пĕрисем шутлаççĕ çеç пулсан, теприсем акма тухнă та ĕнтĕ. Ĕнерхи кун тĕлне районта «Оринино» пĕрлешӳллĕ хуçалăх (8 гектар акнă), «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă общество (30 га), А. Афанасьевăн хресчен (фермер) хуçалăхĕ (60 га) кĕр аки ĕçĕсене кӳлĕннĕ. Уйхир ĕçĕсен планĕпе районăн кăçал кĕртрисене 3631 гектар акса хăвармалла.**

**Саламлатпăр**

Хаклăран та хаклă аннене, хунямана, асаннене – Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Мишер ялĕнче пурăнакан **Галина Николаевна ЛУКОЯНОВĂНА** августăн 25-мĕшĕнче 70 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ырă та ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Яланах сывлăхлă, хавас кăмăл-туйăмлă пулмалла пултăр, кĕрекӳ çăкăр-тăвартан ан таталтăр. Малашне те ачусемпе, мăнукусемпе, мĕн пур тăванупа пĕрле савăнса пурăнмалла пултăр. Пире ырă сунса яланах пулăшса тăнăшăн тав тăватпăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕ, кинĕ, мăнукĕсем, хăтитăхлачисем.**



Юратнă аннене, кукамая – Çатракаси ялĕнче пурăнакан **Нина Степановна САНДРОВĂНА** 90 çулхи сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, канлĕ ватлăх сунатпăр, кĕрекӳ çăкăр-тăвартан ан таталтăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, 8 мăнукĕ мăшăрĕсемпе, 12 кĕçĕн мăнукĕ, хăти-тăхлачисем.**

# Автомашина рулĕ çирĕп алăра



*Виталий Степанов пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ «Свобода» хуçалăхра водитель пулса тăрăшать. Ăсталăхĕ те, опычĕ те çителĕклех унăн. Хăйне шанса панă «ЗиЛ-130» автомашинăна тĕрĕс-тĕкел ĕçлеттерет. Çулталăкăн кирек хăш тапхăрĕнче те ăна валли хуçалăхра ĕç çителĕклĕ. Çак хĕрӳ ĕç çи вăхăтĕнче вара вăл комбайнсем патĕнчен тырă турттарнă çĕрте тăрăшать.*

**В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

## График выездов мобильной бригады при РГУ «Моргаушский центр социального обслуживания населения» по сельским поселениям на встречи с гражданами

| Сельское поселение | Время приема граждан | Дата выезда | Место проведения |
|---|---|---|---|
| Александровское с/п | 10.00-12.00 | 30.08.2011 | Администрация сельского поселения |
| Б.Сундырское с/п в с.Б.Сундырь | 10.00-12.00 | 31.08.2011 | Администрация сельского поселения |
| в с.Б.Карачкино | 13.00-15.00 | | Б.Карачкинская сельская библиотека |
| Ильинское с/п в д.Тренькино | 10.00-12.00 | 01.09.2011 | Администрация сельского поселения |
| в д.Вурманкасы | 13.00-15.00 | | Вурманкасинская сельская библиотека |
| Кадикасинское с/п | 10.00-12.00 | 06.09.2011 | Администрация сельского поселения |
| Москакасинское с/п | 10.00-12.00 | 07.09.2011 | Администрация сельского поселения |
| Орининское с/п | 10.00-12.00 | 08.09.2011 | Администрация сельского поселения |
| Сятракасинское с/п в д. Сятракасы | 10.00-12.00 | 13.09.2011 | Администрация сельского поселения |
| в с. Оточево | 13.00-15.00 | | Оточевская сельская библиотека |
| Тораевское с/п в с.Тораево | 10.00-12.00 | 14.09.2011 | Администрация сельского поселения |
| в д.Анаткасы | 13.00-15.00 | | Анаткасинская сельская бибилиотека |
| Хорнойское с/п в д.Хорной | 10.00-12.00 | 15.09.2011 | Администрация сельского поселения |
| в .д.Тойгильдино | 13.00-15.00 | | Тойгильдинская сельская бибилотека |
| Чуманкасинское с/п | 10.00-12.00 | 20.09.2011 | Администрация сельского поселения |
| Шатьмапосинское с/п | 10.00-12.00 | 21.09.2011 | Администрация сельского поселения |
| Юськасинское с/п | 10.00-12.00 | 22.09.2011 | Администрация сельского поселения |
| Юнгинское с/п | 10.00-12.00 | 27.09.2011 | Администрация сельского поселения |
| Ярославское с/п | 10.00-12.00 | 28.09.2011 | Администрация сельского поселения |
| Ярабайкасинское с/п в д.Ярабайкасы | 10.00-12.00 | 29.09.2011 | Администрация сельского поселения |
| в. д.Сыбайкасы | 13.00-15.00 | | Сыбайкасинская сельская библиотека |
| д.Шоркасы | 10.00-12.00 | 30.09.2011 | Шоркасинский сельский клуб |

**Прием по вопросам:**

- использование социального пакета;
- о предоставлении субсидий на оплату жилого помещения и коммунальных услуг;
- о детских пособиях;
- о льготах ветеранам труда, труженикам тыла, инвалидам и другим категориям граждан;
- о социальном обслуживании населения и др.

**Директор РГУ «Моргаушский ЦСОН» О.В. ИВАНОВА.**

## Объявления

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:070502:209, местоположение: Участок находится примерно в 62 м по направлению на запад от ориентира жилое строение, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, ул. Лесная, д.25, для огородничества, площадью 567 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:090301:135, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, д. Нижние Хачики, ул. Шоссейная, для размещения объекта торговли, площадью 31 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

Райадминистрацире

# Хисеп грамотипе наградăланă

***Хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕ тата Муркашри кирпĕч завочĕ ыйтнисене тивĕçтерсе, район администрацийĕн пуçлăхĕн 2011 çулхи августăн 11-мĕшĕнчи 807 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

**1. Строительствăра тата обществăлла инфраструктурăна аталантарассинче нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн:**

– **Алексей Владимирович ИГНАТЬЕВА**, хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕн строительство тата монтаж ĕçĕсен маçтăрне;

– **Маргарита Михайловна РОМАНОВĂНА**, хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕн штукатур-малярне;

– **Владимир Витальевич СЮЛЬДЕРКИНА**, хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕн водительне.

**2. Промышленноçри строительство материалĕсене туса кăларассин сферинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн:**

– **Алина Александровна ИГНАТЬЕВĂНА**, Муркашри кирпĕч завочĕн транспортировщикне;

– **Надежда Рюриковна МИХАЙЛОВĂНА**, Муркашри кирпĕч завочĕн тĕп бухгалтерĕн çумне;

– **Галина Васильевна КОЛОСЬЕВĂНА**, Муркашри кирпĕч завочĕн формовка уйрăмĕн съемщикне.

Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2011 çулхи августăн 12-мĕшĕнчи 819 № йышăнăвĕпе «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин автомобиль водительне **Олег Геннадьевич ГАВРИЛОВА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парас ĕçри çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2011 çулхи августăн 17-мĕшĕнчи 829 № йышăнăвĕпе «Мăн Хураçкари пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул» муниципаллă бюджет вĕрентӳ учрежденийĕн директорне **Татьяна Георгиевна ЕРМОЛАЕВĂНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

# Илемлĕхĕн чикки çук

Район центрĕ кунран кун тенĕ пекех хитреленсе те илемленсе пынине паян пирĕнтен кашниех курса тăрать. Пирĕншĕн ку вăл темĕнле çĕнĕлĕх те, тĕлĕнмелли те пек мар ĕнтĕ. Çапах та çак илемлĕхе тума, çитменнине ăна кирлĕ шайра тытса тăма мĕн чухлĕ вăй, тăрăшулăх, кунсăр пуçне тата укçа-тенкĕ те кирлине пур чухне шутласах та каймастпăр.

Тасалăха, йĕркелĕхе, илемлĕхе чи малтанах пирĕнтен кашнин хăйĕнчен пуçăнмалла. Çыннăн чун тасалăхĕ кирлĕ. Хушнипе, ятланипе, хистенипе йĕрке те, тасалăх та, типейлĕх те пулас çук. Çакă вăл никамшăн та мар, пĕтĕмпех хамăршăн пулнине чунпа туйса илмелле.

Тирпей-илем пирки нумай калаçатпăр. Хыççăн вара ку тĕлĕшпе ик айкки те тăвайкки тенĕ пекех. Тепĕр чухне курнине те курмăш пулатпăр. Акă урам хушшинех тĕрлĕ çӳп-çап пăрахса хăваракана курсан мĕншĕн-ха ăна кун пек тума юраманни пирки асăрхаттарас мар? Çапла тусан тепрехинче вăл апла хăтланма тăхтаса тăрĕ.

**Сăн ӳкерчĕкре: кама кăна килентермĕ Муркаш ял тăрăхĕн ĕçченĕсен тăрăшулăхĕпе йĕркеленĕ чечексен çак илемлĕ тĕнчи?**

**В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**



# Паспортсене улăштарас пулать

Миграци службинчен

СССР гражданинĕн 1974 çулчченхи паспорчĕсене Раççей гражданинĕн паспорчĕпе улăштарас ĕç 2004 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнче вĕçленнĕ. Анчах та ку е вăл сăлтава пула паспортсене улăштарманнисем те çук мар. Сăлтавĕсем тĕрлĕрен. Вĕсем хушшинче тĕн витĕмĕ тĕлĕшпе паспорта улăштарма тăхтаса тăракансем те пур.

Кун пек категорие кĕрекен граждансем Раççей Федерацийĕн гражданинĕн паспортĕнче харпăр хăйĕн кодне çырмалли, паспортăн страницисене орнамент мелĕпе номерленĕ çĕрте «666» цифра пурри пирки калаççĕ.

Раççей Федерацийĕн гражданинĕн паспорчĕн реквизичĕсемпе пайĕсем РФ гражданинĕн паспорчĕн бланкĕ пирки çырса панисене тивĕçтереççĕ. Ăна Раççей Федерацийĕн Правительстви хăйĕн 1997 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнчи 828 № «Об утверждении Положения о паспорте гражданина Российской Федерации, образца бланка и описания паспорта гражданина Российской Федерации», в том числе графу «личный код» йышăнăвĕпе çирĕплетнĕ.

Раççейри Федераллă миграци службин 2009 çулхи декабрĕн 7-мĕшĕнчи 339 № хушăвĕпе çирĕплетнĕ административлă регламентпа килĕшӳллĕн паспорт бланкĕн 2-мĕш страницинчи «личный код» йĕркене тултармаççĕ. 5-мĕш, 7-мĕш, 9-мĕш, 11-мĕш, 13-мĕш, 15-мĕш тата 19-мĕш страницăсенче «Россия» сăмах çырса хунă. Паспортăн 20 страницинчен 14-шне орнамент мелĕпе номерлесе тухнă. Ку орнаментра «666» цифра çук.

Федераллă миграци службин Чăваш Республикинчи управленийĕн Муркаш районĕ тăрăх территори пункчĕ хăйсен паспорчĕсене улăштарман çынсене çак ĕçе кая юлмасăр туса ирттерме чĕнсе калать. Раççей Федерацийĕн законодательствипе пăхса хуман чухне паспорт улăштармалли вăхăта тăсса янăшăн административлă майпа явап тыттармаççĕ.

**Л. ПЛЕЧОВА, Раççейри Федераллă миграци службин управленийĕн Чăваш Республикинчи Муркаш районĕ тăрăх территори пункчĕн пуçлăхĕ.**

Сирĕн ыйтусене хуравлатпăр

# Административлă надзор пирки

***Ирĕкрен хăтарнă С.А. Иванов административлă надзор законодательстви пирки тĕплĕнрех ăнлантарса пама ыйтать. Ку саккун камсене пырса тивет?***

***Ыйтăва ятарлă прокурор пулăшаканĕ, 2-мĕш класлă юрист Д.А. АЛЕКСЕЕВ хуравлать:***

– 2011 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 2011 çулхи апрелĕн 6-мĕшĕнче йышăннă 64-ФЗ № «Об административном надзоре за лицами, освобожденными из мест лишения свободы» Федераллă саккун вăя кĕчĕ. Административлă надзора суд палăртать. Ăна ирĕкрен хăтарнă е хăтаракан çул çитнĕ çын тĕлĕшпе пама пултараççĕ. Административлă надзор тапхăрне палăртасси уйрăмах йывăр тата йывăр преступлени тунăшăн, çул çитменнисем тĕлĕшпе ятарласа тунă преступленишĕн тата пĕр преступлени тунă хыççăн тепĕр преступлени тунăшăн палăртма пултараççĕ.

Надзора палăртнă чухне ирĕкрен хăтарнă çын наказание ирттернĕ чухне палăртнă йĕркене пăхăнманнине тата ирĕкрен хăтарнăранпа çулталăк хушшинче обществăлла йĕркене 2 е ытларах хут пăснине шута илеççĕ.

Кунпа пĕрлех ар çыхăнăвĕпе çыхăннă преступленисемшĕн, çак преступленисене çул çитменнисем тĕлĕшпе тунăшăн, пĕр преступлени тунă хыççăн тепĕр преступлени тунăшăн обязательнăй майпа административлă надзор палăртассине пăхса хунă.

Надзор тапхăрне пĕр çулталăкран тытăнса виçĕ çул таран палăртаççĕ, çул çитменнисем тĕлĕшпе тунă преступленисемшĕн тата пĕр преступлени тунă хыççăн уйрăмах хăрушă тепĕр преступлени тунă пулсан – судпа айăпланин тапхăрĕ вĕçлениччченех.

Асăннă тапхăра суд вăрăмлатса пама та, кĕскетме те пултарать. Ку вăл пĕтĕмпех надзорлă çын хăйне мĕнле кăтартнинчен, обществăлла йĕркелĕхе епле пăхăннинчен килет.

Пенси ыйтăвĕсемпе

# Вилнĕ граждансенне еткерĕсем илĕç

**Пенси фончĕ вилнĕ граждансен еткерĕсене август уйăхĕнче 2,5 миллион тенкĕ тӳлет. Ку укçа-тенкĕне республикипе 500 çын ытла, вăл шутран Муркаш районĕнче 23 çын илĕ.**

Çапла вара РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ тăванĕ вилнĕренпе 6 уйăх иртнĕ хыççăн заявленипе тухнисене тата çак тапхăра суд урлă çирĕплетнисене 103 еткере пĕр миллион тенкĕне яхăн тӳлет. 1,5 ытла миллион тенкĕне 398 еткере ĕç паракансем страховани взносĕсем тӳлени пирки тăратнă отчет докуменчĕсене кура хушма тӳлев шучĕпе куçарса парĕç.

Сăмах кунта ĕç паракансем Пенси фондне ĕçлекен çыннăн пенсийĕн пухăнакан пайĕ çине куçарса тăнă сумма пирки пырать. Ку суммăна вилнĕ çыннăн еткерне çынна ĕç пенсийĕн пухăнакан пайне тӳлесе тăма пуçăнман пулсан параççĕ. Еткере вилекен çыннăн лицевой счечĕ çинче пухăннă пенси виçипе пĕрлех ăна инвестицилененинчен тунă тупăша та тӳлеççĕ.

Енчен те çын пурăннă чухне пухăнакан пенсие валеçесси пирки заявлени çырса панă пулсан, ăна илекенсем шутĕнче унта кăтартнă пур çын та пулма пултарать. Кун пек заявлени çырман пулсан вара еткерсем шутне чи малтанах ачисем, мăшăрĕ, вилекен çыннăн ашшĕ-амăшĕ, иккĕмĕш шутпа пиччĕшшăллĕсемпе аппăш-йăмăкĕсем, аслашшĕсемпе асламăшĕсем тата мăнукĕсем кĕреççĕ.

Вилнĕ çынсен еткерĕсене укçа-тенкĕне РФ Правительствин 2007 çулхи ноябрĕн 3-мĕшĕнчи 741 № йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн параççĕ. 2008 çултан тытăнса РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ вилнĕ çынсен еткерĕсене 21 миллион тенкĕ тӳленĕ. 2010 çултан тытăнса еткерсене панă тӳлеврен налук илмеççĕ.

Шкул – ял аталанăвĕн уйрăлми пайĕ

# Чи ансат çул – пĕрле пулăшмалла!

Ялсенчи социаллă пурнăçа аталантарасси, çынсен пурнăç условийĕсене лайăхлатасси Раççей Федерацийĕпе Чăваш Республикин ертÿçисен политикин тĕп шанăрĕ. Паянхи çамрăксене ялта хăварма тивĕçлĕ тĕллевсемпе кирлĕ условисем пулмалла. Кунта Чăваш Республикин Президенчĕн сăмахĕсене илсе кăтартас килет. «Çыннăмăрсен сывлăхĕпе пуласлăхĕшĕн вăл хăй çуралса ÿснĕ вырăнта тĕпленсе пурăнни усăллăрах. Çын ĕмĕр тăршшĕпех хăйĕн тăван çĕр-шывĕнче акса ÿстернĕ тата туса илнĕ продуктсемпе апатлантăр, ачаран хăнăхнă шыва ĕçтĕр», – тет Михаил Васильевич. Тĕрĕсех, çиччĕ висçе каланă сăмахсем. Вĕсе илсе кăтартас килет. Юлашки чĕрĕк ĕмĕрте çĕр çула яхăн каялла мăн асаттесем тунă йывăç шкуллă ялта вĕреннĕ яшсемпе хĕрсем çемьесем çавăрса илемлĕ пÿртсемлĕ килти хушма хуçалăхсем йĕркелесе çĕнĕ виçĕ урам çĕклерĕç. Вĕсем ĕçлекен «Свобода» хуçалăх тăрăшулăхĕпе яла çут çанталăк газĕ çитрĕ, ялăн тĕп урамĕпе асфальт çул сарăлса выртрĕ, çĕнĕ вăхăтри Культура çурчĕпе библиотека ĕçлеме пуçларĕç. Çĕнĕлĕхсене тата ырă улшăнусене татах та калама пулать, анчах.... Шăпах çак «анчах» канăç памасть паян Кашмашсене.

Тĕл пулăва пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан тĕп шкул директорĕ Г. Ершова уçрĕ. Вăл

Сăмах май, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн председателĕ О. Макаров ертсе пыракан ĕç ушкăнĕ (унта Чăваш Республикипе ĕçлекен Роспотребнадзор Управленийĕн ертÿçи Н. Луговская, ЧР патшалăх пушар надзорĕн тĕп инспекторĕ Н. Петров, ЧР вĕрентÿ тата çамрăксен политикин министрĕ В. Иванов, район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов, район администрацийĕн вĕрентÿ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ертÿçи З. Дипломатова кĕчĕç) нумаях пулмасть Кашмашсем пуçарнă ыйтупа вырăна тухса паллашрĕç. Çакăн хыççăн шкул çумĕнче йĕркеленĕ ĕç ушкăнĕ Чăваш Республикин



Вĕрентÿ тата çамрăксен политикин министерствине кайса килчĕ.

не кашниех ăша хывма тăрăшать, анчах пурнăç сулăнчăкĕсенче çав чăнлăха хăй еккипе янă тĕслĕхсем те пулаççĕ-ха. Кун хыççăн вара ыррине кĕтме хĕнтерех.

– Хамăрăн умри çутă тĕллевĕмĕрсене хăй еккипе сулăнчăка кайнисен шутне кĕртес марччĕ. Çавна тума пирĕн вăй пур, тăрăшулăх та çитĕ, – терĕç Кашмашри пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан тĕп шкула унăн паянхи кунĕпе интересленсе тата малашлăхĕпе кăсăкланса пухăннисем. Вĕсен хушшинче шкул ĕçĕн ветеранĕсемпе кунтан вĕренсе пурнăç çулĕ çине тухнисем, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ Н. Кожевников, «Свобода» хуçалăх ертÿçи В. Ананьев, ялти активист тата ветеран-педагог Л. Яриков, хастар пахчаçă тата физкультура учителĕнче нумай çул вăй хунă В. Яриков, Çатракасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Ю. Кожевниковпа çак тăрăхри культура ĕçченĕсем пулчĕç.

Вуншар çул каялла шкулта техслужащи пулса вăй хунă, ачасем ăшăра вĕреннчĕр тесе классене кăмака хутса ăшăтнă А. Щукина умра тăракан пани асра юлчĕ. Пурнăçра хура-шурне сахал мар чăтса ирттерсе пуçтарнă пуян ăс-хакăллă мăнакка сăмахĕсем çапларах пулчĕç: «Шкул – ял аталанăвĕн тĕп палли. Çакна хам ĕмĕрти нумай тĕслĕхсемпе çирĕплетме пултаратăп. Шкул пулсан тата ĕçлесен ялта çамрăксем юлаççех. Кун пек чухне ял малашлăхĕ пирки те шанма пулать. Тăван ялта вулама-шутлама вĕреннĕ ача çĕр ĕç культурине те ăша хывать, ялăн ыранхи пурнăçĕ пирки шутлать. Кашмашра та çапла пулнă, пур тата малашне те çавăн пекех пултăрччĕ».

Çак сăмахсем çумне ял пурнăçĕн ÿкерчĕкĕсене ертсе пынипех паян шкулта ĕçлекенсемпе пухăннисем шкулăн тăватă çуртра вырнаçнă класĕсемпе, производство пÿлĕмĕсемпе иртрĕç.

– 1986 çултанпа ялта 83 кил хуçалăхран 3 çĕнĕ урам йĕркеленни тата Çатракасси ял тăрăхĕн генераллă планĕпе пăхнă 2 урам Яриков ячĕпе хисепленекен урам вĕçĕнче 110 ача вырнаçмалăх çĕнĕ шкул тумах ыйтать. Çак ĕç çине эпир паян алă сулсан пулас ăрусем пире мухтамĕç, – терĕ аса илÿсем хыççăн шывланнă куçĕсене шăлса ĕç ветеранĕ Магдалина Толикина.

Халĕ калани çумне çакна хушмалла. Çĕнĕ шкул ыйтăвне Кашмашри вĕрентекенсем пĕрремĕш çул мар малти вырăнта тытаççĕ. Ашшĕ-амăшĕсем ыйтнипех шкул коллективĕ çĕнĕ строительство ыйтăвĕсемпе 2004 çулта пăр тапратнă. Шкулăн пулас вырăнне палăртнă, унти çĕр пахалăхне лабораторире тĕрĕсленĕ. Умра паян тăракан тĕп задача – проект хатĕрлесси. Районпа республика пулăшăвĕ çине çеç шанса лармасăр Кашмашсем çак ĕçе нимелле пуçарса яма тĕв турĕç, расчет счечĕ уçма шутларĕç.

– Халăхăмăр каларăшĕпе пăхсан ачи макăрмасăр амăшĕ кăкăр памасть. Пире район та, республика та пăрахмасса шанатпăр. Анчах умра тăракан пысăк ĕçе хамăрăнах пуçăнмалла. Çакăнта пире ялта пурăнакансем те, тăван шкултан вĕренсе тухса пурнăç çулĕ çинче вырăн тупнисем те, ырă кăмăллă ытти çынсем те пулăшасса шанатпăр, – терĕ Галина Павловна шкул çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленни пирки каласа парсан районти депутатсен Пухăвĕн депутачĕ Н. Кожевников.

– Шкул ыйтăвĕ Кашмашсемпе Хуракасси выççăлкисемшĕн тĕп вырăнта. Сывăх вăхăтрах 3 ачаллă çамрăк çемьесене кил хуçалăхсем çавăрма çĕрсем пама пуçлатпăр. Ку вăл ял аталаннине, пирĕн тăрăхра демографи лару-тăрăвĕ ырă еннелле утăмланине çирĕплетет. Ку çул пурăна киле шкул ыйтăвĕпе тÿрремĕнех сыхăнĕ, – пĕлтерчĕ пухăннисене Çатракасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Ю. Кожевников.

Çамрăксем тăван хуçалăхăн тĕп тĕрекĕ пулнине çавра сĕтел хушшинчи калаçăва хутшăннă В. Ананьев та çирĕплетрĕ:

– Хуçалăх производствинче ашшĕ-амăшĕсен ĕçĕсене династи йĕркипе малалла тăсакан çамрăксем нумай пулни пире ÿсĕм çулĕпе уттарать, çĕнĕ тĕллевсем çĕнме пулăшать. Шкул пĕтерекенсен ĕç вырăнĕ пирки пуç ватма та кирлĕ мар. Çакна шута илсен Кашмашри çĕнĕ шкул çурчĕ кирлех, – терĕ «Свобода» хуçалăх ертÿçи Владислав Кириллович.

Туса ирттернĕ ĕçсем тĕрĕс пулнине палăртса пухăннисем малтанхи вăхăтри укçа-тенкĕ ыйтăвне тарăн ешĕке хăвариччен нимелле ĕçлессине мала кăларасси пирки калаçса татăлчĕç, ыйшăну турĕç.

**Анатолий БЕЛОВ.**

**ХУШСА КАЛАНИ.** 2011-2012 вĕренÿ çулне хатĕрленсе шкул дирекцийĕ учительсем тимленипе 192288,20 тенкĕ, ятарлă счет çинчен 125342,80 тенкĕ тăкакланă. Огнетушительсене тĕрĕсленĕ тата çĕнĕрен зарядланă, сигнализацисене тĕрĕслев витĕр кăларнă. Паян шкул çĕнĕ вĕренÿ çулне тĕпрен илсен хатĕр.

# Килти илемлĕх тĕнчи

Пирĕн паллă ентешсем



Тахçантанпах Мăн Сĕнтĕре кайса курас килетчĕ. Ăнсăртран мар. Кунта 1932–1936 çулсенче Тутаркасси районĕн колхоз шкулĕнче (РКШ) манăн атте К.П. Верендеев ĕçленĕ. Вăл колхозсенчен янă ял çыннисене зоотехника пĕлĕвĕ панă. 10 çул каялла эпĕ Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулта нумай çул рисовани тата черчени урокĕсем ертсе пынă В.К. Бочкаревăпа паллашрăм. Кĕске паллашу кĕçех туслăха çаврăнчĕ. Вара Мăн Сĕнтĕрте темиçе хут та пултăм.

Кăçалхи нарăс уйăхĕн 17-мĕшĕнче Валентина Константиновна 86 çул тултарчĕ. Паянхи кун маншăн вăл Мăн Сĕнтĕрте пурăнни те, ачасене шкулта вĕрентнисĕр пуçне (ĕç стажĕ – 40 çул) хăй те картинăсем ÿкерме юратни те, унăн ашшĕ К.Т. Гаврилов ăста художник пулни те питĕ интереслĕ. Ку çеç те мар, Валентина Константиновна сăнарĕ ÿнер искусствин пуянлăх лаççине ĕмĕрлĕхех кĕрсе юлнă. Мĕншĕн тесен Раççейăн паллă художникĕ Н. Сверчков хăйĕн «Пушкин в чувашской деревне» картинине ÿкернĕ чух чăвашăн шыв кĕвенти йăтнă йăрăс та çамрăк, хитре хĕрĕн сăнарне калăплама вăл вăхăтри художество училищин студенткине Валентина Гавриловăна чĕннĕ. Çак ĕçе паян ÿнер музейĕнче пиншер çын курса савăнать.

Валентина Константиновна Муркаш тăрăхĕшĕн паллă çын. Вăл пĕр вăхăталлах Шупашкарти строительство техникумĕнчен (1943–1946 çулсенче) тата тĕп хулари художество училищинчен (1946–1949 çулсенче) вĕренсе тухнă. Çакăн хыççăн хастар хĕрарăм пĕтĕм ĕç пурнăçне Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕпе çыхăнтарнă. Кунти вăтам шкулта ĕçлеме пуçласан çамрăк учительница Кармăшра пурăннă тата шкулта ĕçпе физкультура урокĕсем ирттерекен Илларий Васильевич Бочкаревпа çемье çавăрать. Мăшăрĕ ăсталанă сĕтел-пуканпа кил таврашĕнче халĕ те усă кураççĕ.

Пурнăçра çĕнĕрен çĕннине шыракан, тăтăш вĕренсе пĕлĕве аталантарассишĕн тăрăшакан хĕрарăм, 5 ача амăшĕ (Бочкаревсем 4 хĕрпе ывăл çуратса ÿстернĕ) 1972 çулта Шупашкарти педагогика институтĕн ÿнерпе графика факультетне ăнăçлă пĕтерет, алла диплом илет. Аслă пĕлÿ илни унăн пултарулăхне татах та пуянлатнă, çĕнĕ шая çĕкленĕ, тăрăшуллăрах ĕçлеме хавхалантарнă.

Илемлĕх тĕнчин тыткăнĕнче пурăнаççĕ паян Бочкаревсем. Вĕсен килне çитсен картинăсен чăнчăн галерейине кĕнĕнех туйăнать. Пур пÿлĕмсенче те стенасене акварельпе тата çуллă сăрăпа ÿкернĕ картинăсем, этюдсем, портретсем, пейзажсемпе натюрмортсем илемлетеççĕ. Курма пыраканпа вĕсем хăйсен чĕлхипе калаçаççĕ, илемлĕх тĕнчине шаларах та шаларах йыхравлаççĕ, вĕсене ÿкернĕ çыннăн чунне уçса параççĕ. Картинăсен авторĕсем: Валентина Константиновна хăй, унăн ашшĕ Константин Гаврилович, В.К. Бочкаревăн мăнукĕсем. Хĕрĕсем тĕрленĕ панносем те нумай кунта. Шкафсенче Валентина Константиновнăн шăллĕ Алим Гаврилов скульптор ăсталанă макетсем тăраççĕ, Мăн Сĕнтĕрти ÿнер шкулĕнче вĕренекен мăнукĕсем хатĕрленĕ сувенирсем упранаççĕ. Çак пуянлăха кашни пÿлĕмрех чечексем хăйне евĕр илем кÿреççĕ.

Валентина Константиновна Бочкаревăн паян ачисен тата мăнукĕсен кĕçĕн мăнукĕсен çемйи пысăк. Вĕсемпе пĕрлех тăван шкул учителĕсемпе хăйĕн вĕренекенĕсем, ырă кăмăллă та ĕçчен ял çыннисемпе кÿршисем – унăн тăтăш хăнисем.

**Т. ВЕРЕНДЕЕВА.**

Шупашкар хули.

# Вут-кăварпа паттăррăн кĕрешрĕç

Пушар хăрушсăрлăхĕ

Хăрушлăх тени тĕрлĕрен пулма пултарать пулсан та пирĕн тăрăхшăн чи пăшăрхантараканни – вут-кăвар ирĕке кайса алхасни. Пушар хамăр тимсĕрлĕхпе тухнипе пĕрлех çут çанталăк пулăмĕсемпе те вăй илет. Шăпах çакнашкал тĕслĕх пулчĕ те иртнĕ шăмат кун, çурла уйăхĕн 20-мĕшĕнче, «Свобода» хуçалăхĕн Кашмашри ĕне ферминче. Аслатиллĕ çумăр вăхăтĕнче анчах купаланă улăм урине çисĕм çапрĕ.

Çак инкек «Свобода» хуçалăх та, Кашмашра пурăнакансем те, Муркашри пушар часĕ те, кÿршĕллĕ хуçалăхсем те йывăр вăхăтра пĕр-пĕрне вăй çитнĕ таран пулăшма хатĕр пулнине кăтартса пачĕ. Йăсăрланакан улăм уринче çулăм малалла ан кайтăр тесе «Свобода» хуçалăхри И. Николаев механизатор улăм рулонĕсене илсе çулăм çулне пÿлни те, Кашмашри пушар машининчи шывра сысна фермин заведующийĕ В. Никитин тата хуçалăх специалисчĕ А. Ишаков кÿршĕллĕ улăм ури умĕнче тăтăш сыхăра тăни те, Кашмаш йĕтемĕ çинче тыră турттарассипе тимлекен Р. Толикин водитель киле кайса хушма хуçалăхри тракторпа 5 тоннăллă шыв цистернипе вăхăтра шыв кÿрсе килни те, Г. Валежниковăн ДТ-75, Ю. Димитриевăн ХТЗ бульдозер-тракторĕсем çийĕнчех çитни те инкекпе пуçламăш самантранах çанă тавăрса кĕрешме май пачĕ. Çакна та каламалла. Муркашри 37-мĕш номерлĕ пушар часĕн ĕçченĕсем инкек вырăнне икĕ пушар машини кăларни те, кÿршĕсене пулăшма кÿршĕллĕ хуçалăхсен пушар машинисем килни те çулăма вăй илмех памарĕ. Чапаев яч. хис. тата Е. Андреев яч. хис. хуçалăхсенчен килсе çитнĕ тракторсем те «хĕрлĕ автанпа» кĕрешес ĕçре пысăк пулăшу пулчĕç.

ДТ-75 бульдозерпа П. Толикин механизатор вара вут тивнĕ рулонсенчи улăма салатассипе çичĕ хут тар кăларса ĕçлерĕ. Унăн «хурçă учĕ» пуç çĕклеме хăтланакан çулăм çине паттăррăн епле ыткăннине пушар сÿнтерме пынисем хăраса çеç пăхрĕç.

– Тавах пушара сÿнтерме хутшăннă ял çыннисене, вăхăтра килсе çитнĕ районти пушар хуралĕн ĕçченĕсене, инкекре пулăшу алли тăсса панă хуçалăхсен ертÿçисемпе механизаторĕсене. Пĕрлехи тимлĕхпе тата тăрăшулăхпа пысăкрах çухатуран пăрăнса иртрĕмĕр, – терĕ тепĕр кунне тав сăмахĕсем «Свобода» хуçалăхăн ертÿçи В. Ананьев.

... Пушар вăл ăнсăрт пулăм. Кашмашри ĕне фермине улăм ури çуннă вăхăтрах Муркашри 37-мĕш номерлĕ пушар хуралне Ильинка ял тăрăхĕнчи Кусăк ялĕнче А. Кабуркин хуçалăхĕнче пушар тухни пирки хыпар çитет. Улăм урине сÿнтерес çĕре ЗиЛ-130 автомашина кăларса Муркашсем Кусăкна васкарĕç. Кил хуçалăх теплипех кĕлленчĕ пулсан та çăлавçăсем вут-çулăма кÿршĕ хуçалăхсем çине сарăлма памарĕç. Пушар сăлтавĕпе паян тĕпчев ĕçĕсем пыраççĕ.

Районти патшалăх надзор ĕçĕ-хĕлĕн уйрăмĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене туса пыракан Андрей Васильевич Ефимов каласа панинчен: кăçал район территорийĕнче 26 пушар алхаснă, вут-çулăм тыткăнĕнче 2 çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнă, çисĕм çапнипе унччен икĕ ача çурчĕ кĕлленнĕ.

– Юлашки 10 çул хушшинче район территорийĕнче аслатиллĕ çумăрсем вăхăтĕнче пÿрт-çуртсене е çынсене çисĕм çапнă тĕслĕхсем 30 яхăн пулчĕç. Çакăн сăлтавĕ – сывлăш ытларах вараланни. Унччнерех сывлăш питĕ хăватлă диэлектрик пулнă – ун витĕр электричество каяйман. Ăна пулах çисĕм çапасси те никама шухăшлаттарман. Сывлăш вараланнипе тата унта тĕрлĕ электрохумсем тулнипе юлашки çулсенче вăл аслатиллĕ çумăрсем вăхăтĕнче пĕлĕтре пухăннă электричество зарядне хăй витĕр çĕр çине яма пуçларĕ. Унччен космоса кайнă зарядсем халĕ тăтăшах çĕр пичĕ çине анаççĕ.

Мĕнле хÿтĕленмелле-ха çисĕм çапасран? Ку ыйту паян малти вырăна тухрĕ. Малтанах пур çуртсене те çисĕмрен хÿтĕлесе çĕрпе çыхăнтармалла. Çавна валли çуртсене 4 енчен те çĕрпе сыпăнтарас пулать. Аслатиллĕ çумăр вăхăтĕнче пур электроприборсене те электричество линийĕнчен уйăрмалла, телевизор антеннине телевизортан кăлармалла. Урамра е хирте чухне кĕсье телефонĕсене сÿнтермелле. Çумăртан пыннă чух тимĕр конструкцисенчен пăрăнма тăрăшмалла. Производство обьекчĕсенче çисĕме сирмелли устройствăсем вырнаçтарассине мала кăлармалла, – терĕ Андрей Васильевич. Сыхланакана Турă та сыхлать. Çапла пултăрччĕ.

**А. ПЕТРОВ.**

Спорт

## Маттур, Нина!

Çурла уйăхĕн 19-мĕшĕнче çăмăл атлетсем 20 çухрăм хăвăрт утассипе тупăшнă. Çатракасси ял тăрăхĕнчи Кашмаш ялĕн хĕрĕ Нина Охотникова универсиадăн бронза медальне тивĕçнĕ. 20 çулти маттур пике – тĕнче спорт мастерĕ. Унран Саранск хĕрĕ Т. Шемякина 87 çеккунт маларах çитнĕ. Пĕрремĕш вырăна вара Джулия Такач Ниргес испанка тухнă. Унăн кăтартăвĕ пирĕн ентешĕннинчен 1 минут та 59 çеккунт лайăхрах.

Кашмаш хĕрĕ республикăри А. Игнатьев ячĕллĕ пĕрлештернĕ командăсен спорт хатĕрлевĕн центрĕнче Олимп ваййисен призерĕ Олимпиада Иванова патĕнче спорт ăсталăхне туптать. Çак вĕренÿ çулĕччен вара унăн тренерĕ Н. Родионов пулнă. Утă уйăхĕнче Нина Европа çамрăкĕсен чемпионачĕнчен кĕмĕл медальпе таврăннăччĕ. Спорт ăсти Шупашкарти олимп резервĕсен училищинче тата Мускав патшалăх уçă университечĕн Шупашкарти филиалĕнче пĕлÿ пухать. Малашне вара хамăр ентеше татах та пысăкрах çитĕнÿсем тума ырлăх-сывлăх сунар. **Хам. инф.**

# «Асăрханăр – ачасем!»

ГИБДД асăрхаттарать

Ачасем çул-йĕр çинче тимсĕр пулни чылай чухне хăрушă инкекпе вĕçленет. Ку енĕпе профилактика ĕçĕсем тăтăшах иртеççĕ пулин те татах та ытларах тимлеме, асăрханулăха ÿстерме тивет. Çул-йĕр çинчи кашни тăххăрмĕш инкек ачапăча хутшăннипе пулать.

Çул-йĕр çинче Чăваш Республикинче çичĕ уйăхра 123 авари пулнă, вĕсенче 3 ача пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнă, 129 ача сусăрланнă. Кашни çиччĕмĕш инкек çул çитмен çамрăк хутшăннипе пулнă. Çул-йĕр çинчи аварисен ÿсĕмĕ ачасем хутшăннипе уйрăмах кĕркунне пуçламăшĕнче палăрать. Çуллахи кану вăхăтĕнче вĕсен тимсĕрлĕхĕ чакать. Çавна май ача-пăча тимлĕхне ÿстерес, вĕсене çул-йĕр хăрушсăрлăх правилисене хăнăхтарас тĕллĕпе августăн 15-мĕшĕнчен пуçласа сентябрĕн 11-мĕшĕччен районта «Асăрханăр – ачасем» Пĕтĕм Раççейри профилактика ĕçĕ иртет.

Район территоринче çул-йĕр çинчи инкек иртнĕ çулхи çак тапхăртипе танлаштарсан 200 процент чухлĕ пулнă.

Акă март уйăхĕнче Калмăккасси ялĕ çывăхĕнче хăрушă авари пулчĕ. Унта кĕçĕн çулхи ачасем тата ытти пассажирсем йывăр суранланчĕç, автомашина водителĕ вырăнтах вилчĕ.

Тепĕр авари апрель уйăхĕнче Кашмаш ялĕнче пулчĕ, автомашина рульне вăхăтра тытса ĕлкĕреймесĕр икĕ çынна пырса çапнă, инкек вырăнĕнчен тарса пытаннă. Кун йышши инкек тăтăш пулса иртет, кашнине асăнса та пĕтереймĕн. Çавăнпа та чи кирли – асăрхануллă та тимлĕ пулни.

Аварисен сăлтавĕсене тишкернĕ май хăш-пĕр йĕркесĕрлĕх куç умне тухать. Çул çине тухсан хăрушсăрлăх пиçиххине çыхманни, ача-пăча валли ятарлă ларкăчпа усă курманни, 14 çула çитменнисене ятарлă ларкăчсăр малти вырăна лартни, пассажир шутне палăртнинчен ÿстерни хăрушă инкек патне илсе пыраççĕ.

**С. ИВАНОВ,**
**районти ГИБДД уйрăмĕн пуçлăхĕ, полицин асла лейтенанчĕ.**

Сĕнетĕп

## Парне туянма пĕлетпĕр-и?

Чи актуллă ыйту уяв умĕн вăл – «Мĕн парнелесшĕ?». Пур çын та хăйĕн пурнăçĕнче çак ыйтупа тĕл пулнă ĕнтĕ. Анчах та çынна хитре парне кăна мар, усăллине те парнелес килет. Эсир парнелес текен çын футболпа интереслент пулсан, ăна хоккей клюшки ним тума та кирлĕ мар. Е çын классика юррисене кăна итлет пулсан ăна хальхи юрăсен дискне пани вырăнсăр.

Çывăх çын валли парне илес тесен эсир унпа уяв çитиччен лавккасене кайма пултаратăр. Ăна интереслентерекен япаласем умĕнче вăл чарăнать, мĕн килĕшнипе килĕшменни çинчен калать. Çакăн хыççăн вара сире парне туянма та çăмăлрах пулĕ.

Хăш-пĕрисем хăйсене мĕн парнелемелли çинчен тÿрррĕн калаççĕ. Паллах, ку парне сюрприз пулмасть, анчах çын хăйне мĕн панишĕн хĕпĕртет. Юлашки вăхăтра уявсенче укçан парне пама пуçларĕç. «Хăйсене мĕн кирлĕ çавна туянчăр», – тет нумайăшĕ. Ку мел чи çăмăлли тата тĕрĕсси теме те пулать.

Çапах та чи хаклă парне вăл – хăв алăпа ăсталани. Анчах ăна тума ăсталăх та, вăхăт та кирлĕ. Парне илес ыйтура халĕ çĕнĕлĕхсем пур. Паянхи кун нумайăшне сертификат парнелеççĕ. Тĕслĕхрен, Муркашри «Суту-илÿ центрĕ» чиккĕллĕ явапллăхлă пĕрлешÿре ăна туянма пулать. «Пирĕн суту-илÿ çуртĕнче эсир 500, 1000, 3000 тенкĕллĕ сертификатсем туянма пултаратăр. Хăкĕсене маларах заказ парса улăштарма май пур, – каласа пачĕ В.В. Максимова заведующи. – Çак сертификатпа тĕрлĕ вăхăтра усă курма пулать, ятарлă йышăннă вăхăчĕ çук. Пирĕн суту-илÿ çуртĕнче пурĕ ултă уйрăм ĕçлет, вĕсенче хăвăра килĕшекен табара туянма пулать. Енчен те тавар хакĕ сертификатра кăтартнă хакран пысăкрах пулсан сирĕн çитменнине хушма май пур. Эпир сертификата 2010 çулта сутма пуçланă».

Çапла вара сертификат пысăк усă кÿрет: кăмăл çĕкленет, ăна йышăнаканĕ вара хăйне килĕшекен тавар туянма пултарать. Парне туянасси – çăмăл ĕç мар çав. Çын эсир панă парне çине кăмăллă, савăнăçлă пăхнине нимĕн те çитмест. Ăна панă чухне ăшă сăмахсем çинчен те ан манăр.

**Ольга ПАВЛОВА,**
**ЧПУ студентки.**

Полици хроникинчен

## Капла та пулать

Çамрăксем кăна-и, аслă ăрурисем те пит правур иккен халĕ. Пĕрре те маххă памаççĕ, алла патак тытаççĕ те пĕр шелсĕр теприне тÿплеттереççĕ.

Акă августăн 13-мĕшĕнче Йусккассинчи ваттисен çурчĕн иккĕмĕш хутĕнче икĕ кинемей урлă-пирлĕ сăмахпа перкелешеççĕ. Анчах та çакăнпа кăна çырлахмаççĕ, 1937 çулта çуралнн çулĕпе аслăраххине туйса-ши, хăйĕнчен кĕçĕнреххине патакпа темиçе хутчен çапать. Инкек тÿснин вара тĕрлĕ сурансем нушалантарнипе районти тĕп больницăра вăй хуракансенчен пулăшу ыйтма тивет. Халĕ вĕсем тĕлĕшпе йĕрке хуралçисем тимлеççĕ.

## Арçын е ...

Çак кунсенче Чуманкасси ял тăрăхĕнчи Отаркка ялĕнчи пĕр çемьере вăхăт каç еннелле сулăнсан харкашу тухать. Эрех ĕçсе ÿсĕрĕлнĕ арçын хăйне вăрçă хирĕнчи салтак евĕр туйса илет. Тискер кайăк туйăмĕллĕскерне арăмĕ те тăшман пек курăнма пуçлать. Çапăçу вăхăтĕнчи евĕр ÿсĕрскер алла çĕçĕ тытса хĕрарăм еннелле сывхарать, хăлаçланать, вĕлерессипе хăратать.

Çапла та пулать çав çын ретĕнчен тухсан, эрехе туслашсан, ĕçрен аякра тăрсан. Халĕ ку тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарас ыйту тăрать.

Тен урама пачах та тухма пăрахмалла? Кашни арçын кĕсйинчех çĕçĕ упранать тейĕн. Акă Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Лап Олкашри икĕ арçын калаçнă хушăрах хирĕçсе каяççĕ. Мĕн тетĕр, каллех çĕçĕ кĕсьере. Кĕçĕнреххи пĕр шутласа тăмасăр теприне хул айĕнчен çĕçĕпе чикет. Суранланнине вара Муркаш больницине илсе çитерме тивет. Халĕ преступник тĕлĕшпе РФ УК 115 статйипе уголовлă ĕç пуçарас ыйту тăрать.

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

кредитный потребительский
КАПИТАЛ
кооператив граждан
работает на вас
6-23-10
всегда доступные займы
ипотечные займы с использованием материнского капитала
принимаем сбережения под серьёзные проценты
ул. Чапаева, 44 а / 2 8 927 667-48-92
kpkgkapital.ru
работаем с пайщиками

**Продается ВАЗ-2109-3 2001 года выпуска, инжектор, тонировка, сигнализация, цвет серо-синий в отличном состоянии. Тел.: 8-927-860-31-37. Шишкин Сергей.**

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник.**
**Тел.: 8-906-131-32-75, 8-927-859-91-55. 3-5.**

* * *

**Урпа тата тăваткал тюкланă урпа, сĕлĕ улăмĕ сутатпăр. Комбайнпа тырă вырса паратпăр. Тел.: 8-909-304-08-81, 8-919-671-96-26.**

* * *

**Снимем квартиру в с. Моргауши. Чистоту и порядок гарантируем. Тел.: 8-917-664-09-52. 1-2.**

**Куплю дорого ВОЛОСЫ – до 80000 руб за 1 кг. 26 агуста ( в пятницу) с 9-00 час. до 15-00 час. в парикмахерской Дома быта.**

* * *

**Уважаемые покупатели! Моргаушское райпо приглашает Вас на ШКОЛЬНУЮ ЯРМАРКУ, которая состоится 26 августа 2011 г. на центральной площади с. Моргауши (рядом с магазином «Гастроном»). Здесь вы найдете все необходимое вам и вашим детям для школы. Наши цены ниже рыночных.**

* * *

**ЗАО «МСО «Моргаушская» требуется водитель КамАЗа с прицепом. Реализует блоки керамзитобетонные пропаренные.. Обращаться по тел.: 69-7-23, 69-8-59.**

Юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн

## Тав тăватпăр

Пирĕн юратнă йăмăка, мăшăра, аннене, кукамая, тавраи паллă та хисеплĕ учительницăна Раиса Сергеевна Савельевăна юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн чĕререн тав тăватпăр: Москакассинчи вăтам шкул администрацине, пĕтĕм учительсене, шкулти поварсене, водительсене, аякри тата çывăхри хурăнташсене, кÿршĕсене, ачасен ашшĕ-амăшĕсене, Москакассин ăшă кăмăллă çыннисене. Тата уйрăм тавăмпа Кăпас çыннисене. Тепĕр хут пуçа таятпăр сире пурне те йывăр вăхăтра пирĕнпе пĕрле пулнăшăн.

**Тăванĕсем.**

Пирĕн çывăх çыннăмăра, аппана, Муркаш районĕнчи Кĕçĕн Чураш ялĕнче пурăннă Антонина Петровна Петровăна юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, çак пысăк хуйхăна пирĕнпе пĕрле пайланăшăн хурăнташ-тăвансене, пускилсене, ял-йыша чĕререн тухакан пысăк тав сăмахĕ калатпăр.

**Петровсен, Сидоровсен çемйисем,**
**Сусанна йăмăкĕ.**




Прогноз погоды

| | среда 24 августа | | | | четверг 25 августа | | | | пятница 26 августа | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +7 | +10 | +14 | +8 | +5 | +11 | +17 | +10 | +9 | +14 | +19 | +13 |
| Давление мм | 748 | 748 | 748 | 750 | 750 | 751 | 750 | 751 | 750 | 750 | 750 | 751 |
| Влажность % | 81 | 64 | 45 | 70 | 87 | 64 | 42 | 73 | 85 | 77 | 47 | 74 |
| Ветер | С | С-В | С | С | С | С | С-З | З | З | С-З | С-З | З |
| м/сек | 3 | 5 | 4 | 1 | 3 | 4 | 3 | 4 | 3 | 3 | 2 | 4 |
| Солнце восход/заход | | 05:40 | 20:09 | | | 05:42 | 20:06 | | | 05:44 | 20:04 | |
| Луна восход/заход | | - | 17:19 | | | 00:38 | 17:56 | | | 01:55 | 18:25 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |

Пĕлтерÿсем. Объявления

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 3-5.**

Магазин-салон
ГАЗОВЫЕ ТЕХНОЛОГИИ
п. Кугеси, ул. Шоссейная, 13
тел. 8-987-668-04-83
реклама
ГАЗОВЫЕ КОТЛЫ, КОЛОНКИ
GAZLUX,WOLF,
ПЛИТЫ (газ-контроль)
Разработано совместно ОАО "ГАЗПРОМ-РЕГИОНГАЗ" и ОАО НИИ "ГИПРОНИИГАЗ" специально для Российских условий эксплуатации
ГАЗОВЫЕ КОТЛЫ: SIBERIA, ОЧАГ
Выполняем: проекты газификации, квалифицированный монтаж
Доставка и установка плиты - БЕСПЛАТНО, рассрочка оплаты
г. Чебоксары, Сев. ярмарка,тп №10
тел. 8-951-998-90-77

* * *

**СТРОИТЕЛЬНО-МОНТАЖНЫЕ РАБОТЫ**

**Демонтаж и монтаж систем отопления и водоснабжения из полипропилена и металлопластиком. Установка всех видов сантехприборов: душевые кабины, ванны, унитазы, счетчики воды и т.д. Кровельные и отделочные работы: гипсокартон, вагонка, сайдинг, ПВХ, МДФ и т. д. Тел.: 8-953-012-67-02.**

**26 августа с 8-00 до 16-00 часов в районном Доме культуры Ульяновская обувная фабрика проводит выставку-продажу обуви из натуральной кожи Ульяновской, Белорусской фабрик и других Российских производителей.**

**Çĕр участокĕ çурт-йĕрпе пĕрле туянатăп.**
**Тел.: 8-902-240-66-94.**

* * *

**Заключение публичных слушаний по проекту решения Собрания депутатов Юнгинского сельского поселения «О внесении изменений в генеральный план Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики» от 16 августа 2011 года:**

**1. Рекомендовать Собранию депутатов Юнгинского сельского поселения внести изменения в генеральный план Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики при условии предоставления ООО «ТранзитСити» учредительных документов.**

**2. Рекомендовать ООО «ТранзитСити» при строительстве АЗС в придорожной полосе федеральной автомобильной дороги М-7 км 611+900 м слева по ходу километража соблюдать санитарно-защитную зону населенного пункта.**

**3. Требовать от ООО «ТранзитСити», администрации Юнгинского сельского поселения и администрации Моргаушского района благоустроить дороги на улицах деревни Юнгапоси (построить дороги с асфальто-бетонным покрытием).**

Мăн Сĕнтĕр больница коллективĕ кунта нумай çул хушши лабораторкăра ĕçленĕ А.М. Кульковăн юратнă мăшăрĕ, участковый врач-педиатрăн Г.Г. Егоровăн ашшĕ

**КУЛЬКОВ Герман**

вилсе кайнă пирки тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркаш райпо коллективĕ кунта нумай çул хушши сутуçă пулса ĕçленĕ

**Анфиса Владимировна ОВЧИННИКОВА**

йывăр чирленĕ хыççăн вилсе кайнă пирки унăн тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле пĕтĕм чунчĕререн тарăннăн хурлинине пĕлтерет.

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçат
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

Тĕп редакторшăн В.Л. ШАПОШНИКОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкрахисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерÿсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Белов А.П.
Пичете панă 23.08.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4343.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерÿ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.